тасатсам эс лайӑхрах», —  
терӗҫ килтисем мана  
урама тухма чарсах.

Шӑртлӑ щётка тасатма  
акӑ пуҫӑнчӗ кӗҫех.  
Урари пушмакӑма  
турӗ ҫӗнӗ пек каллех.









* * *

Вӑл пулать-мӗн тӗрлӗрен:  
шӑл тасатать ирсерен,  
тепри пушмак ҫутатать,  
леш тумтире якатать,  
ак ку шӑлса тасатать.






# Ъ

(хытăлăх палли)

съезд
подъ|езд
разъ|езд



## Пирĕн подъезд

Эпир пилĕк хутлă çуртра пурăнатпăр. Ку çуртра тăватă подъезд. Пирĕн подъездра вун пилĕк хваттер. Пирĕн хваттер тăваттăмĕш хутра. Вăл виçĕ пӳлĕмлĕ.

Пирĕн çемьере тăватă çын: атте, анне, эпĕ тата шăллăм.



?

а, ӑ, ӗ, и, о,
у, ӳ, ы, э, е,
ё, ю, я

б, в, г, д, ж, з, й, к,
л, м, н, п, р, с, т, ҫ,
ф, х, ц, ч, ш, щ

ь, ъ

б, в, г, д,
ж, з

к, п, с,
т, ф, ш

в, й, л, м,
н, р

й, ҫ, ч, щ

ж, ц

а, ӑ, ӗ, и, о, у, ӳ, ы, э

е, ё, ю, я

ӗ, ӳ, ҫ

о, ё, б, г, д, ж, з

а, ӑ, о, у, ы

ӗ, и, ӳ, э, е, ё, ю, я

# ХАМĂР ТĔЛЛĔН ВУЛАТПĂР

## Тăван çĕршывăм — Чăваш Ен



Иван Яковлевич Яковлев — чăвашсен чаплă та мухтавлă çынни.

### И. Я. Яковлев

Иван Яковлевич Яковлев — вĕрентекен. Вăл Чĕмпĕрте пурăннă. Унта чăваш шкулне уçнă. И. Я. Яковлев чăваш алфавитне тунă. Букварь хатĕрленĕ. Ачасене çырма, вулама, шутлама вĕрентнĕ. Вĕсем валли калавсем çырнă.

И. Я. Яковлев — чăваш халăхне çутта кăларакан çын. Иван Яковлевич чăваш халăхне вĕрентес тесе нумай ĕçленĕ. Ăна чăваш халăхĕ юрататъ, яланах асра тытатъ.

## Халал сăмахĕ

Ырă çын пул. Ватă çынсене, хăвăнтан аслисене хисепле, тантăшусем умĕнче пусçна ан каçăрт, хăвăнтан кĕçĕннисене пурне те кăмăл кур. Аçупа аннӳне хисепле, вĕсен сăмахĕнчен ан тух.

Сана усал тума çуратман, ырă тума çуратнă! Ăна эсĕ ан ман: мĕн вăй çитнĕ таран çынсене ырă тума тăрăш. Усал ĕç тума мар, усал сăмах та ан кала. Ваттисем калаçнă чух вĕсен сăмахне ан пӳл, пĕр чĕнмесĕр итлесе тăр.



Çыннăнне пĕр япала та ан вăрла, хăвăн мĕн пуррипе тутă пул. Çынтан кивçен илсессĕн вăхăтĕнче каялла пар. Каланă сăмаха тыт. Нихăçан та ан суеçтер. Наян ан пул, ĕçчен пул, хастарлă пул. Çынпа хирĕç пулсассăн ырă, ăшă сăмах кала. Çак каланă сăмахсем тăрăх пурăнсассăн ырă çын пулăн, сана юлташусем, пĕлĕшӳсем пурте юратĕç. Санăн пурнăçу вара телейлĕ пулĕ.

И. Яковлев

## Усăлма тухнă шăши çури

Пĕр шăши çури шăтăкĕнчен усăлса çӳреме тухнă тет. Çӳресен-çӳресен вăл амăшĕ патне таврăнчĕ те çапла каларĕ тет:

— Ах, анне, эпĕ икĕ кайăк куртăм-çке! Пĕри пит аван, тепри тискертен те тискер ĕнтĕ!

— Мĕнле кайăксем вĕсем апла? — тесе ыйтрĕ тет амăшĕ.

— Тискерри картишĕнче ак çапла уткаласа çӳрет-çке!.. Хăй хура ураллă, хĕрлĕ çĕлĕклĕ, сăмси кукăр! Эпĕ ун умĕнчен иртсе пынă чух хăрах урине çӳлелле çĕклерĕ те çăварне карса пăрахрĕ, унтан кăшкăрса ячĕ! Хăранипе ниçта кайса кĕре пĕлмерĕм çав.



— Ара, ачам, автан-çке вăл! Унтан мĕн апла тĕрлĕ хăрасси пур! Унăн пирĕн тĕлтен нимĕн усаллăхĕ те çук. Тата тепри мĕнлеччĕ?

— Тепри хĕвел ăшшинче ăшăнса выртатчĕ. Вăл шурă майлă, сăрă уралла. Шурă ăмăрне çулакаласа выртатчĕ. Хӳрине хăй кăшт вĕл-вĕл сиктеркелет, ман çине кусне пĕр илмесĕр ăшшăн пăхать.

— Эй, айван, айван!.. Ачам, вăл кушак аçи вĕт, — тесе каларĕ тет амăшĕ çурине. — Вăт унтан хăрамалла, тармалла.

И. Яковлев



## Парне

Пĕррехинче касхине
ырă чунлă асанне
усрĕ те шур арчине
чĕнчĕ мана хăй патне.
Кĕмĕл тевет, мăй сыххи,
тухья, сурпан, писихи,
хĕрлĕ сатин кĕпесем,
сарă хитре саппунсем,
сут калушпа шур чăлха,
пурсăн тутăр, ик сăмха... —
саксене йалт асанне
пачĕ мана — мăнукне.

Р. Сарпи



Андриян Григорьевич Николаев — чăвашсен чаплă та мухтавлă ҫынни.

## А. Г. Николаев

Андриян Григорьевич Николаев — виҫҫĕмĕш космонавт лётчик. Вăл чăваш ачисемшĕн уйрăмах ҫывăх. Ҫапла пулмасăр тата, вăл пирĕн ентеш-ҫке. Андриян Николаев Чăваш ҫĕрĕнче чăваш ҫăкăрне ҫисе, чăваш вăййисене выляса, чăваш юррисене юрласа ӳснĕ чăваш ачи.

Паттăр космонавтăн тăван ялĕ — Шуршăл. Шуршăл ҫав тери илемлĕ вырăнта вырнаҫнă.

Ял урамĕсем тирпейлĕ, ешĕл йăмраллă. Ҫывăхра — ҫырмасем, ҫарансемпе улăхсем, вăрман. Ҫавал шывĕ те ҫак ял ҫумĕпех юхса иртет. Ҫавал — Атăлăн сылтăм юппи.

А.Г. Николаев «Восток-3» караппа тĕнче уҫлăхне вĕҫсе хăпарнă, тĕнчере ҫĕр-ҫĕр халăх




йышӗнче чӑвашсем те пурӑнни, Шуршӑл ялӗ те пурри ҫинчен пӗлтернӗ. Вӑл икӗ хутчен Совет Союзӗн Геройӗ ятне тивӗҫнӗ.

Шуршӑлти Космонавтика музейӗ — Раҫҫейри пӗртен-пӗр космонавтика музейӗ.

Андриян Николаев — Чӑваш Ен мухтавӗ. Унӑн ырӑ ячӗ-сумӗ, ҫутӑ сӑнарӗ яланах халӑх асӗнче упранӗ.

Юхма Мишши

## Паттӑр Андриян

Тӳпере вӗҫсе ҫӳрерӗн
Кӑйкӑрпа пӗр тан,
Эс чӑваш ятне ҫӗклерӗн,
Паттӑр Андриян.

Уйăха салам каларăн
Анлă Атăлтан,
Çăлтăра та эс пуç тайрăн,
Паттăр Андриян.

Ю. Сементер

## Манăн тăван Шуршăл

Шуршăл ялĕ таçтанах курăнса ларать. Вăл «шурă çăл» тенинчен пулса кайнă. Пирĕн унта çăлкуç питĕ нумай. Кашнин хăйĕн ячĕ пур. Пĕри — Сивĕ çăл, тепри — Çутă çăл, виççĕмĕшĕ — Сенкер çăл.



Ял Атăлăн сылтăм енче айлăмра ларать. Атăл çийĕн хĕвел хăпарнине курма мĕн тери илемлĕ!

Тĕнче усăлăхĕнче вĕçнĕ чухне манăн ĕçчен Тăван çĕршыв, тăван Шуршăл яланах юнашар пулчĕç. Шуршăл тесен кăмăл пушшех çĕкленетчĕ. Мĕнле-ши унта анне, пиччепе шăллăм, йăмăкăм? Мĕнле эсир унта, тăван шурă çăлсем? Мĕн тери юратса ĕçнĕ пулăттăм сирĕн вăй кĕртекен сивĕ шывăра. Атте-анне килĕ çывăхĕнче шăнкăртатса юхакан шыва нимĕн те çитмест. Çапла шухăшларăм эпĕ Çĕр тавра вĕçнĕ чух. Таврăнсан сирĕн шывăра нумай хутчен пырса ĕçрĕм, тăван Шуршăл çăлĕсем.

А. Николаев

## Чăваш çĕршывĕ

Чăваш çĕршывĕ!

Вăл улăхсемпе, вăрмансемпе пуян. Вăрмансенче тĕрлĕ йывăç ӳсет: юман, çăка, хыр, чăрăш, вĕрене, ăвăс, хурама, хурăн, пилеш, çĕмĕрт, палан, шĕшкĕ. Унта тĕрлĕ чĕр чун пурăнать: мулкач, тилĕ, пăши, упа, кашкăр, пакша. Вăрман вăл — Чăваш çĕршывĕн илемĕ.

 


Чăваш çĕршывĕ урлă анлă Атăл, лăпкă
Сăр, Çавал, Ункă, Хырла, Пăла, Кĕтне, Энĕш,
Сурăм шывĕсем юхса выртаççĕ.

Шупашкар — Чăваш Республикин тĕп хули.
Паянхи Шупашкар — пысăк та илемлĕ хула.
Мĕн кăна туса кăлармаççĕ пулĕ унта: пир-
авăр, атă-пушмак, кĕпе-тумтир, сĕтел-пукан,
хăватлă тракторсем...

Шупашкарта аслă шкулсем, театрсем, куль-
тура керменĕсем пур. Унта чăваш сăмахĕ
витĕмлĕн те уççăн янăрать.

Чăваш Республикинче тата çакăн пек ху-
ласем пур: Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Етĕр-
не, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Канаш,
Улатăр.

Пирĕн республикăн хăйĕн ялавĕ, гербĕ
тата гимнĕ пур.

Ӳсет, чечекленет юратнă Чăваш çĕршывĕ!

Г. Волков

## Пирĕн ял

Пирĕн ял вырнаçнă
юхан шыв хĕрне.
Урамĕсем аслă,
çурчĕсем хитре.

Йăмрасем ÿсеççĕ
лăпкăн кашласа.
Кайăксем чилеççĕ
чăваша савса.

Ферма, завод евĕр,
шав шавлать пĕрмай,
кăларать вĕç-хĕрсĕр
сĕт-çу, аш-какай.

Ăмăртса ĕçлеççĕ
уйра та çынсем,
тимлĕ ÿстереççĕ
ылтăн тырăсем.

Чупатпăр эпир те
ирсерен шкула.
Çитĕнсен вĕрентĕ
пире мăн хула.

П. Ялкир












## Хĕвел

Кăлтăр кусса тухрĕ
тӳпене хĕвел,
йăлтăр кулса ячĕ
çитерсе мехел.
Ĕмĕртен тăванлă
çĕрпеле хĕвел,
пурăнаççĕ туслă,
тĕрĕс те тĕкел.

П. Эревет

* * *

Каçа хирĕç пытанать,
ирпе каллех тупăнать.

## Çĕр парни

— Акă, ачасем, сире валли çĕр парни, çийĕр, — терĕ амăшĕ тин пĕçернĕ çĕнĕ çĕр улмине сĕтел çине лартса.

— Çĕр парни тетĕн-и? — тĕлĕнчĕ Сентти.

— Çĕр улми вăл — çĕр парни, ăна çĕр ӳстерсе паратъ, — терĕ Раман.

— Çăкăр та çĕр çинче ӳсет-и? — ыйтрĕ Сентти.

— Уй-хирте çĕр çинче тыр-пул ӳсет. Арманта тырăран çăнăх тăватпăр. Çăнăхран çăкăр пĕçеретпĕр, — ăнлантарчĕ ăна Раман.

— Пахча çимĕç те, тыр-пул та, улма-çырла та çĕр çинче ӳсеççĕ, эпир вара вĕсенчен тутлă апат хатĕрлетпĕр, — терĕ амăшĕ.

## Ăшă çумăр

Усă çилĕ килет
кăвак пĕлĕт илсе.
Кăвак пĕлĕт килет
ăшă çумăр илсе.
Ăшă çумăр килет
ырлăх-пурлăх илсе.

П. Эйзин



# Çулталăк вăхăчĕсем



Хирсенче юр анчах,
çырмара пăр анчах.
Сивĕтет аванах...
Ку хăçан пулать-ши?

К. Иванов

## Хĕллехи савăнăç

Тинех хĕл кунĕсем çитрĕç. Тавралăх шурă юрпа витĕнчĕ. Хĕл Мучи чӳречесене илемлĕ тĕрĕсемпе тĕрлерĕ. Кӳлĕри, çырмари шывсем шăнса ларчĕç. Çынсем ăшă тумтир тăхăнчĕç.

Хĕл Мучи хаваслăх илсе килчĕ. Ачасем йĕлтĕрпе, конькипе, çунашкапа ярăнаççĕ.

Кĕçех шкулта Çĕнĕ çул ёлки пулмалла. Ачасем ёлка илемлетме теттесем хатĕрлеççĕ, юрă-ташă вĕренеççĕ.

## Хĕлле

Хура алсиш —
алăра.
Шур çăматă —
урара.
Кăвак тутăр —
пуçăмра.
Сар çунашка —
айăмра.

П. Эйзин



## Юр айĕнчи кайăксем

Пĕррехинче эпĕ вăрман тăрăх йĕлтĕрпе пыратăп. Çанталăк уяр, сивĕ. Пĕр пысăк усланка пырса тухрăм. Унта çӳллĕ хурăнсем ларасçĕ. Вĕсем çинче ăсансем кăчкă пуçтараççĕ.

Сасартăк ăсансем çĕре вĕççе анчĕç те тасţа кайса çухалчĕç. Вĕсем хыççăн хурчка вĕççе анчĕ, хурăн айне пычĕ те юр çинче уткаласа çӳрет. Ăсансем çинчех çӳрет хăй, анчах вĕсене курмасть. Юра кăшт кăна чавса илмелле те ăсана тытмалла çеç, анчах хурчка çакна тавçăрса илеймест. Çакă мана питĕ тĕлĕнмелле пек туйăнчĕ.

М. Пришвин



Шурӑ юр ирӗлет,
ҫеҫен хир чӗрӗлет,
ешӗл курӑк ӳсет...
Ку хӑҫан пулать-ши?
К. Иванов

## Ҫуркунне

Хӗвел кашни кун ҫӳлерен ҫӳле ҫӗкленет. Вӑл хӑйӗн шевлине ҫӗр ҫине пӗр шелсӗр сапалать. Унӑн ӑшшипе ҫут ҫанталӑк чӗрӗлет. Хаваслӑ кайӑксем ҫуркуннене мухтаса чӗвӗлтетеҫҫӗ. Ҫырмасенче шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхать.

Ҫуркунне — тӳпери тӑрисен янӑравлӑ юрри, ака-суха тӑвакан тракторсен кӗрлевӗ, юр пек шурӑ та таса ҫӗмӗрт ҫеҫкисен илемӗ. Мӗнешкел ырӑ эсӗ, ҫуркунне!

Хěвел хытă хěртет,
ăшă çил вěркелет,
сар ыраш çитěнет...
Ку хăçан пулать-ши?
К. Иванов



## Çулла

Çу кунěсем çитрěç. Хěвел хěртсе пăхать. Шкул ачисем каникулта. Вěсем шыва кěреççě, хăйăр çинче хěртěнеççě, сывлăха çирěплетеççě.

Вăрманта та, пахчара та çырла пиçме пуçларě. Чи малтан çěр çырли пиççе çитрě. Ун хыççăн хăмла çырли пиçме тытăнчě. Ачасем вăрмана çырла, кăмпа татма çÿреççě.

Ытла та ырă-çке çу кунěсем!



Хир илемӗ каять,
сӗм вӑрман ҫаралать,
пӗрмай ҫумӑр ҫӑвать...
Ку хӑҫан пулать-ши?

К. Иванов

## Кӗркунне

Ҫу кунӗсем иртсе кайрӗҫ. Ылтӑн кӗркунне ҫитрӗ. Халӗ вӑрманта мӗнле илемлӗ!.. Емешӗл йывӑҫсем хушшинче сарӑ, хӗрлӗ ҫулҫӑсем курӑнкаласҫӗ. Ав унта вӗрене сап-сарӑ ларать, ӑвӑс та хӗрелнӗ, шӗшкӗ те хӑмӑрланнӑ. Паланпа улмуҫҫи ҫулҫисем те саралма тытӑннӑ. Пахчаран ҫӗр улми, купӑста, кишӗр, кӑшман пуҫтарса кӗнӗ те ӗнтӗ. Уйхире симӗс ыраш калчи кӑна илем кӳрет.

Тулӑх, илемлӗ кӗркунне! Эсӗ кунта ахаль килмерӗн, пире тӗрлӗ ҫимӗҫ парнелерӗн: тӗш тырӑ та, пахча ҫимӗҫӗ те, вӑрман ҫимӗҫӗ те.

# Талăк

## Çĕрле

* * *

Алтăр çăлтăр —
çич çăлтăр,
çиччĕшĕ те çут çăлтăр.

* * *

Пĕрре тухса пăхсассăн —
çурла пулса курăнать.
Тепре тухса пăхсассăн —
çăмха пулса курăнать.
Татах тухса пăхсассăн —
таçта тарса пытанать.

* * *

Кăвак çитти саратăп,
вĕтĕ шăрçа сапатăп.
Вĕтĕ шăрçа хушшине
кĕмĕл уйăх хуратăп.

* * *

Уйăх çути — çул çути.
Хĕвел çути — кун çути.



# Ирхине

## Тул çутăлать

Тул çутăлма пуçларĕ. Чăваш çĕршывĕ ерипен ыйхăран вăранать. Пĕчĕк çырмасенче шыв шăнкăртататать. Часах ытти сасăсем хутшăнаççĕ. Кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕнĕрлет. Хапхасемпе алăксем уçăлса хупăнаççĕ. Йытă вĕрет. Автансем каçса кайсах авăтаççĕ. Çынсем калаçаççĕ. Çĕр тĕрлĕ сасă илтĕнсе тăрать.

М. Кипек

## Ирхине



Автан ячĕ авăтса:
ки-ки-ри-ки!
Ячĕ чăх кăтăклатса:
кăт-кăт-ик!
Çерçи ячĕ юрласа:
чи-чи-чи!
Ячĕ сурăх макăрса:
ма-а-а!
Ĕне ячĕ мĕкĕрсе:
му-у-у!
Ячĕ йытă та вĕрсе:
хам-хам-хам!

П. Эйзин



## Тарланă Тарас

Çулла. Çанталăк шăрăх тăнă. Тарас пахчара çум çумланă. Вăл хытă тарланă. Çав вăхăтра урамра ачасем шыва кĕме чупни курăннă. Тарас та вĕсенчен юлман.

Ачасем шыва кĕме пуçланă. Тарас чупса пынă та хывăннă-хывăнман шыва чăмнă. Чăмасса чăмнă, анчах вăл каялла тухайман. Ăна шăнăр туртса хутлатса лартнă.

Юрать-ха çывăхрах аслă класра вĕренекен Çеруш хĕвел питтинче хĕртĕнсе выртнă. Вăл Тараса шывран туртса кăларнă.

Ачасем, хытă тарланă пулсан шыва чăмма ан васкăр!

И. Шухши

# Каçхине

## Каç пулать

Каç пулса килет. Хӗвел анса ларма хатӗрленет. Йывӑççен мӗлкисем вӑрӑмланчӗç.

Вылььӑх-чӗрлӗх картишӗнче. Пӗр путек çеç, хӑйӗн амӑшне çухатнӑскер, урамра макӑрса çӳрет. Часах унӑн сасси те лӑпланчӗ: хуçи путеккине тупса кайрӗ.

Ача-пӑча пӳрте кӗме васкамасть-ха. Ытарайми вӑййисем киле ярасшӑн мар вӗсене.

Хӗвел анса ларчӗ. Таврана каç сӑнӗ çапрӗ. Урам пушанчӗ.

## Кушак аçипе хур аçи

— Кахал, — тет кушак аçине хур аçи, — кӑнтӑр вӑхӑчӗ, пурте ӗçлеççӗ, эсӗ вара çывӑрса выртатӑн. Намӑс.

Хӗвел аннӑ. Каç пулнӑ. Кушак аçи сунара тухнӑ.

— Ухмах, — тет хур аçи кушак аçине, — халӗ пурте çывӑраççӗ. Канмалли вӑхӑт.

— Манӑн ӗçӗ çаплалла, — тавӑрать кушак аçи хур аçине.

И. Шухши

# Атте-аннерен хакли çук

## Юратнă анне



— Кам-ха пире юратса,
хăй аллипе хăй йăтса
лăпка-лăпка ӳстерет,
çунат пиллет, вĕçтерет?
— Юратнă анне.

— Кам-ха эпир чирлесен,
япала-мĕн çĕмĕрсен,
аран-аран вĕренсен
куçне хупмасть каççерен?
— Юратнă анне.

В. Давыдов-Анатри

## Аттепе анне

Ашшĕпе амăшĕ апат шырама тухса кайсан шăнкăрч чĕпписем хăйсен пĕчĕк чĕлхипе пикенсех чĕвĕлтетрĕç.

— Чăн та, ырă пирĕн анне, — терĕ пĕрри. — Пире валли ăман тупса килет.

— Лайăхах çав атте пурри, — терĕ тепри. — Вăл питĕ вăйлă. Атте пулман пулсан-и, пире тахçанах çерçисем çĕре кăларса



ыvătатчĕç. Пирĕн йăвара вĕсем хăйсем пурăнасшăн пулнă. Атте вĕсене хăваласа янă.

Виççĕмĕшĕ те сăмах чĕнмесĕр юлмарĕ. Сап-сарă сăмсине хăй çумне сĕркелерĕ те чĕвĕлтетме пуçларĕ.

— Иккĕшĕ те сывлăхлă пурăнччăр пирĕн аттепе анне. Вĕсем пулсан пире ÿссе çитĕнме те çăмăл.

Г. Мальцев

## Пушмакĕ ыvăннă

Виçĕ çулхи Энтруша аслашшĕ хăйпе пĕрле утара илсе кайнă. Энтруш малтанласа аслашшĕ аллинчен тытса аванах чупса пынă. Пăртак кайнă та:

— Асатте, мана йăт-ха, пушмак ыvăнчĕ, — тенĕ.

М. Сакмаров



## Асанне

Асанне ирех тăрать —
ăш ыйхăран вăратать.
Ăш ыйхăран вăратать,
вăратнă май сăмахлать:

— Каçпа часах выртмалла,
ирпе ирех тăмалла.
Кам ирпе ирех тăрать —
пултаруллă çын пулать.

Н. Ыдарай



## Асанне е кукамай

Кайрăм асанне патне
пĕринче эп хăнана.
— Асанне, теп, асанне,
пĕрре вăрç-ха Динăна.
Мĕншĕн вăл сана ялан
кукамай тесе чĕнет?
Çак мана мĕнпур чунтан
кулленех кӳрентерет.

— Çук, — тет Дина, — эсĕ ху
йăнăшатăн яланах.
Кукамай, тархасшăн, хуш,
тĕрĕс чĕнтĕр вăл сана. —
Асанне йăл кулнă май:
— Шутлăр, — терĕ, — иксĕрех:
асанне е кукамай?
Хăшĕ пулĕ тĕрĕсрех?

П. Çăлкуç





## Шăллăм улталанни

Пĕррехинче шăллăмпа иксĕмĕр вăрмана кайрăмăр. Кĕтмен çĕртен вăл манран уйрăлса курăк çине чĕркуçленсе ларчĕ те:

— Пичче, кил-ха! Калта тытрăм, — терĕ.

Эпĕ ун патнелле васкарăм. Çитрĕм те: шăллăм аллинче калта çук та, хӳри кăна.

— Эпĕ чăн-чăн калтах тытнăччĕ-çке. Сана чĕннĕ вăхăтра вăл таçта кайса кĕчĕ, — кăмăлсăррăн пăхрĕ вăл ман çине.

Шăллăма калтасем çинчен каласа пама лекрĕ. Вĕсем тăшман аллине лексен пурнăçне çăлса хăварас тесе хӳрине татса хăвараççĕ. Хăйсем тараççĕ. Калтасен хӳри вара каллех ӳссе çитĕнет.

М. Козлов

## Чӗрӗп

Пӗрре ачасем вӑрмана кайнӑ. Вӗсем унта чӗрӗп курнӑ та ӑна тытасшӑн пулнӑ. Петӗр мучи ачасене асӑрханӑ та ҫапла каланӑ:

— Ачасем, чӗрӗпӗн ҫурисем пур, вӗсем выҫӑ, ан тивӗр ӑна.

Ачасем Петӗр мучие итленӗ. Чӗрӗп хӑйӗн ҫурисем патне чупнӑ.

Ачасем, чӗрӗпсене ан тивӗр. Вӗсем усӑллӑ чӗр чунсем.





## Чӗкеҫ



Чӗкеҫ, чӗкеҫ, чӗкеҫӗ
пӗртте канма пӗлмерӗ:
кунӗпе вӗҫсе ҫӳрерӗ,
улӑм пӗрчи пуҫтарчӗ,
тӑмпа шӑлса ҫыпӑҫтарчӗ,
хӑйне йӑва ҫавӑрчӗ,
ҫӑмарта тума тытӑнчӗ.

Ҫӑмартасем турӗ те
йӑви ҫинчен анмасть те —
чӗп тухасса кӗтет вӑл.
Акӑ чӗпӗ кӑларчӗ:
чӗпписем ун чӑйлатаҫҫӗ,
ҫиме апат ыйтаҫҫӗ.

Чӗкеҫ, чӗкеҫ, чӗкеҫӗ,
кунӗпе вӗҫсе ҫӳрет вӑл,
пӗртте канма пӗлмест вӑл:
шӑна-пӑван пуҫтарать,
чӗпписене тӑрантарать.

К. Иванов

## Чăх чĕпписем

Чăх хăйĕн чĕпписемпе уничере курăк çинче усăлса çӳрет. Вăрман енчен хура пĕлĕтсем йышлăн капланса тухрĕç. Ял çине васкаса шуса килме пуçларĕç.

— Каç пулать, анне çуначĕ айне пуçтарăнар! — шип-шип туса ыттисене чĕнчĕ пĕр чĕппи.

Ăна итлесе ыттисем те амăшĕн çуначĕ айне кĕрсе ларма хатĕрленчĕç.

— Чĕппĕмсем, — астутарчĕ амăшĕ, — халĕ кăнтăр вăхăчĕ кăна. Кусем хура пĕлĕтсем шуса тухрĕç. Вĕсем хĕвел тĕлне пулсан кун тĕксĕмленет.

— Мĕн вăл пĕлĕт? — ыйтрĕ пĕри.

— Мĕн вăл хĕвел? — пĕлесшĕн пулчĕ тепри.

— Мĕн вăл çутă кун? — ăнланасшăн хыпаланчĕ виççĕмĕшĕ.

Амăшĕ чĕпписене пĕлĕт çинчен те, хĕвел çинчен те, çутă кун çинчен те йĕрки-йĕркипе ăнлантарчĕ.

— Хĕвел тухрĕ! — сасартăк кăшкăрса ячĕ пĕри.

Пурте таврана саланчĕç. Пĕчĕк сăмсисемпе симĕс курăка сăхма пуçларĕç.

Г. Мальцев



## Ашшĕ-амăш, чĕпписем



Аслă ял çывăхĕнче —
Мăн Çавал,
Мăн Çавал çыранĕнче —
шур хăва,
шур хăва чăтлăхĕнче —
йăвасем,
йăвасен ытамĕнче —
чĕпĕсем.

Ăшăтаççĕ чĕпсене
амăшсем,
ачашлаççĕ вĕсене
ашшĕсем,
çитереççĕ,
ÿстереççĕ,
юррине итлеттереççĕ,
вăхăт çиттĕр — вĕçтереççĕ.

Б. Романов

# Юмах ярӑп, юптарӑп

## Кишӗр-мишӗр

Йӑран ҫинче кишӗр ӳснӗ.

«Йӑлӑхтарчӗ пӗр вырӑнта ларса. Кайса ҫӳрем-ха. Кӳрше кӗрсе тухам», — шутлать вӑл. Таплаттарать хӑй ҫулӗпе. Ӑна хирӗҫ мулкач сиккелесе пырать. «Эй-эй! Мӗнле тутлӑ апат килет», — савӑнать вӑл.

— Кишӗр-мишӗр, ӑҫта ҫул тытрӑн? — ыйтать мулкач ҫывӑхах пырса.

— Купӑста инке патне хӑнана каятӑп, —



тет кишĕр. «Купăста патне, — пушшех хĕпĕртесе ӳкет мулкач. — Мĕн чухлĕ тутлă апат пулать ман валли!»

— Кишĕр-мишĕр, мана та пĕрле илсе кайха, — тет мулкач.

— Атя, кайăпăр, — килĕшет кишĕр.

Утаççĕ хайхи кишĕрпе мулкач.

Кӳршĕ пахчара Палкан ятлă йытă пурăннă. Мулкач çывхарнине туять те çавă тытăнать вĕрме.

— Хам! Хам!

— Ах, кишĕр-мишĕр! — тăпах чарăнать мулкач. — Вăхăт çук манăн хăнасем тăрăх çӳреме... Тепре куриччен! — вăртах çаврăнать те вăрманалла тапса сикет.

З. Нестерова

## Автанпа тилĕ

Картишĕнче темĕн чухлĕ чăх-чĕп çӳрет. Тул енче, çӳллĕ карта хыçĕнче, сарă тилĕ йăпшăнса пырать. Шĕвĕр сăмсине унта-кунта тĕрткелесе пăхать, анчах ниçтан та кĕмелли çук. Акă хӳме çине автан вĕçсе ларчĕ те çуначĕсене çат-çат-çат! çапса янăравлăн юрласа ячĕ.



— Ки-ки-ре-ку-у-у!

— Ах, автан тус! — йăпăртатса пычĕ ун патне тилĕ. — Сассу ытла та хăватлă санăн. Вăйлă пулас эсĕ. Ан кунта, пĕрле выльăпăр.

— Вăхăт çук манăн санпа выляма. Эпĕ Хураçка тусăма чĕнетĕп. Вăл паян ирех вăрмана тилĕ тытма кайрĕ. Ки-ки-ре-ку-у-у! — каллех хыттăн кăшкăрчĕ автан.

Çакна илтсен чее тилĕ вĕлт çаврăнчĕ те тарăн çырма еннелле вĕçтере пачĕ.

З. Нестерова

## Тилĕпе шăши çури

— Шăши çури, шăши çури, санăн сăмсу мĕншĕн хура?

— Çĕр чаврăм.

— Мĕншĕн çĕр чаврăн?

— Шăтăк турăм.

— Мĕншĕн шăтăк турăн?

— Санран, тилĕ, пытанма.

— Шăши çури, шăши çури, сана сыхласа тăрăп та ярса тытăп!

— Манăн вара шăтăкра вăрттăн пӳлĕм пур.

— Çиес килсен — тухатăнах!

— Манăн вара шăтăкра пĕчĕк кĕлет пур.

— Шăши çури, шăши çури, эпĕ санăн шăтăкна чавса тустарса пĕтерĕп.

— Эпĕ вăрттăн çулпа тухăп та тарăп — курса та юлаймăн!

В. Бианки





## Ниме

Вырма, çапма йыхрав ятăм —
йышпа тухса ниме турăм.
Шăши пычĕ çурлапа,
йытти пычĕ çавапа,
хура кушак — тăпачпа,
чăпар автан — сенĕкпе,
чăххи-чĕппи — хутаçпа,
качакийĕ — кăрманпа.

В. Ахун



## Чакакпа чĕппи

Чакак хăйĕн чĕппине сыхă пулма вĕрентет тет. Çинĕ чухне те иртен-çӳрен чĕр чунсенчен асăрханма хушать тет.

— Эсĕ виççĕ сăх та пĕрре çаврăнса пăх, виççĕ сăх та пĕрре çаврăнса пăх, — тесе калать тет.

— Сăхмассеренех çаврăнса пăхсан мĕн пулĕ-ши? — тесе калать тет чĕппи.

— Ара, эсĕ манран та чее-çке! — терĕ тет чакак чĕппине.

# Вĕренни — пысăк пуянлăх

## Шкула кайнă чух

Эпир Маюк тантăшпа иксĕмĕр пĕрле шкула кайма тухрăмăр. Ял урамĕпе утнă чухне хамăртан аслă çынсене нумай тĕл пултăмăр. Анюк аппапа Петĕр пичче ĕçе васкатчĕç. Кĕтерне инке шыв ăсса таврăнатчĕ.

Маюкпа иксĕмĕр вĕсене пурне те сывлăх сунтăмăр. Вĕсем те пире ăшă сăмахсем каларĕç.

Ю. Сементер

## Тав

Манăн пичче Мускавра пурăнать. Кашни çулах, пан улми пиçнĕ вăхăтра, вăл пирĕн пата хăнана килет. Пичче яланах парнесем илсе килет. Кăçал та вăл мана хитре ӳкерчĕклĕ кĕнеке пачĕ. Эпĕ савăннипе парнене аттепе аннене кăтартма васкарăм. Атте мана:

— Парне илсен тав тăвас пулать, — терĕ.

— Пысăк тав сана, пичче, — терĕм эпĕ.

— Тĕрĕс. Йĕркеллĕ ача ырă ĕçшĕн яланах тав тăвать, — терĕ пичче мана мухтаса.

Эпĕ халĕ нихçан та тав тума манмастăп.

В. Прохоров

# Эп хамах



Никамран та маларах
эп паян вăрантăм.
Вырăна та эп хамах
майласа пуçтартăм.



Çăвăнтăм сивĕ шывпа,
тăхăнтăм, тумлантăм.
Пĕчĕк симĕс лейкăпа
чечексем шăвартăм.

Çинĕ хыççăн эп хамах
чашăк-тирĕк çурăм.
Чăхсене те эп хамах
апат пама тухрăм.



Анне тĕлĕнчĕ. Тăрать
ним те ăнланмасăр.
— Хам тăвап, — тесе калать
вăл мана шанмасăр.

— Эс, анне, мана ан чар
ĕçлеме пĕрре те.
Эп халь пĕчĕк пепке мар,
эп халь пысăк ĕнтĕ.

П. Эйзин



## Чи тутли

Ҫуркунне Светлана, Валерик тата Зина ҫӗр чавса кӑпкалатрӗҫ, кӗреплепе сӳрелерӗҫ те виҫӗ тикӗс йӑран турӗҫ. Пӗри — Светланӑн, тепри — Валерикӑн, виҫҫӗмӗшӗ — Зинӑн.

Светлана кишӗр акрӗ, Валерик — ҫарӑк, Зина вара — хӑяр.

Ачасем ҫӑвӗпех пахчара тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Кӗркунне ҫитрӗ. Йӑрансем ҫинче кишӗр, ҫарӑк, хӑяр питӗ ӑнса пулчӗ. Ачасем ҫимӗҫсене тутанса пӑхрӗҫ.

— Мӗнле тутлӑ кишӗр! — терӗ Светлана.

— Мӗнле тутлӑ ҫарӑк! — терӗ Валерик.

— Мӗнле тутлӑ хӑяр! — терӗ Зина.

Тӗрӗс вӗт: хӑвӑр акса, хӑвӑр пӑхса ӳстернӗ пахча ҫимӗҫ чӑннипех те тутлӑ.

Б. Данилов

## Урамра

Виççĕри Ваçук,
тăваттăри Таçук,
пиллĕкри Палюк,
улттăри Улюк,
çиччĕри Çерук
тухнă урама
вăйă выляма.



Чупнă чылайччен,
хырăм выçиччен
виççĕри Ваçук,
тăваттăри Таçук,
пиллĕкри Палюк,
улттăри Улюк,
çиччĕри Çерук.

Хытă ĕшенсе
ывăнса çитсен
утнă килелле
виççĕри Ваçук,
тăваттăри Таçук,
пиллĕкри Палюк,
улттăри Улюк...



Пĕр юлташĕ çук.
Кам-ха ку?

Л. Смолина

## Ҫуралнӑ кун

Юрӑн ҫуралнӑ кунӗ ҫитрӗ. Ун патне хӑнасем пухӑнчӗҫ, парнесем илсе килчӗҫ.

Володя кӑранташсем туяннӑ, Наташа — ӳкерчӗклӗ кӗнеке, Таня — шоколад. Пӗчӗкҫӗ Ира парнине килне манса хӑварнӑ иккен, ҫавӑнпа вӑл йӗрсе ячӗ. Юра йӑл кулса илчӗ те:

— Ан йӗр, Ира! Эпӗ сана кӗтнӗ вӗт, парне мар, — терӗ.

Н. Карай

## Кентти ӳкерет



Кӑранташ — тӗрлӗ тӗсли,
пӗр тетрадь — хулӑн хутли...
Кентти ашшӗн парнине
кӑтартать халь кашнине.
— Ак ӳкертӗм:
ку — тӳпе,
ҫап-ҫут ҫӑлтӑр кӗтӳпе...
Ку ак пирӗн тӑван ял,
ку ҫырма,
кунта вӑрман...
Ҫӳл тӳпере, ав куран, —
Николаев Андриян.

Е. Афанасьев



## Ӳссен эсӗ кам пулан?

Эпӗ ыйтрӑм Лёньӑран:
«Ӳссен эсӗ кам пулан?»
Лёня лётчик пулап тет,
Самолётпа вӗҫеп тет.

Эпӗ ыйтрӑм Павӑлран:
«Ӳссен эсӗ кам пулан?»
Павӑл пахчаҫ пулап тет,
Эп арбуз юратап тет.

В. Давыдов-Анатри



## Мĕн тума пĕлетĕн?

Пĕрремĕш класа ҫĕнĕ вĕренекен пычĕ. Вăл Владик ятлă. Учительница ăна Таньăпа юнашар лартрĕ. Таня пĕрремĕш урокра шăпах ларчĕ-ха. Иккĕмĕш урокра тӳсеймерĕ, мухтанма пуҫларĕ:

— Эпĕ юрăсем юрлама пĕлетĕп. Эпĕ кантрапа сикме пултаратăп. Эпĕ питĕ хытă чупатăп... Эсĕ мĕн тума пĕлетĕн?

— Шăп ларма тата учительницăна итлеме пĕлетĕп, — таварчĕ Владик.

Ю. Ермолаев

## Икĕ çирĕм пус

Урамра пĕр ача макăрса ларнă. Ун патĕнчен иртсе пыракан çын чарăнса:

— Мĕншĕн макăратăн, ачам? — тесе ыйтнă.

— Çирĕм пус укçа пурччĕ ман, халĕ çухатрăм, — тенĕ лешĕ.

— Акă ме çирĕм пус, ан макăр, — тенĕ те çын утма тăнă. Вăл пĕр-ик утăм ярса пуснă çĕре ача тата хытăрах кăшкăрса макăрса янă. Иртсе каякан çын каялла çаврăнса пынă та:

— Мĕншĕн кун пекех кăшкăрса макăратăн? — тесе ыйтнă каллех.

— Çирĕм пуса çухатман пулсан халь ман икĕ çирĕм пус укçа пулатчĕ, — тенĕ ача.

И. Патмар

## Çĕр çырли



Çĕр çырли, çĕр çырли,
чи шултри те чи хĕрли,
эпĕ татрăм пĕр пурак —
хăналарăм Якура.
Якур чирлĕ — утаймасть,
больницăран тухаймасть.
Çырла çитĕр ытларах,
тен, сывалĕ хăвăртрах.

А. Ыхра

## Мĕн тума юрамасть?

Эс килте пĕччен пулсан
ют ҫынна ан кĕрт нихҫан.
Халь пур вăрă,
хулиган...
Вĕсенчен ялан сыхлан.




Ют машинăна ан лар —
ют ҫын санăн кукку мар.
Илсе кайĕ таҫталла,
таврăнаймăн каялла.



Хуҫасăр япалана,
пакета е сумкăна,
ан варалан тĕкĕнсе,
бомба кайĕ сирпĕнсе.




Ан выля шăрпăкпала
е зажигалкăпала.
Вăййу ярĕ ҫемьене
ҫывăрма пускил патне.

П. Ялкир

**Ырă ҫынпа паллаш, усал ҫынтан тар.**
**Инкек куҫа курăнса килмест.**



## Таня кĕнеке вулать

Амăшĕ çĕнĕ кĕнеке илсе килчĕ. Вăл ăна Таньăна парнелерĕ те çапла каларĕ:

— Эсĕ пĕчĕккĕ чухне сана асаннӳ вуласа паратчĕ. Халĕ эсĕ пысăк ӗнтĕ. Ку кĕнекене асаннӳне ху вуласа пар-ха.

Таня кĕнекене илчĕ. Вăл амăшне парнешĕн тав турĕ. Унтан Таня асламăшĕ патне чупса пычĕ те:

— Лар, асанне! Эпĕ сана юмахсем вуласа парăп, — терĕ.

Таня вуларĕ. Асламăшĕ итлерĕ. Амăшĕ савăнчĕ.

В. Осеева



## Кушак ҫури

Кушак ҫури сӗтел ҫинче ларакан аквариум тавра уткаласа ҫӳрерӗ, урине шыва чиксе пӑхрӗ. Пӗр пуллине тытса ҫиесшӗнччӗ, анчах та лешсем тыттармарӗҫ. Пӳрте Ваҫук кӗчӗ. Кушак ҫури урайне тӳп! сиксе анчӗ.

— Каллех айӑпа кӗтӗн-и-ха? — терӗ ӑна Ваҫук.

Кушак ҫури йӑвашшӑн макӑрса илчӗ те Ваҫук урине ачашшӑн сӗртӗнчӗ.

Н. Карай

## Вӗрентӗм вулама



Ҫӳреттӗм кӗнеке йӑтса:
«Тархасшӑн, парӑр вуласа», —
калаттӑм эп асаннене
е йӑлӑнаттӑм аннене.
Вӗрентӗм халӗ вулама,
чӑрмав кӳместӗп никама.

В. Берестов

Учебное издание

**Ермошкина Анисия Алексеевна**
**Чернова Нина Николаевна**

**ЧӐВАШ АЗБУКИ**

**ЧУВАШСКАЯ АЗБУКА**

Учебник для 1 класса
начальной школы

Редактор *А.Г. Владимирова*
Макет художника *В.Н. Гончарова*
Художники *М.Ю. Николаев, И.В. Алексеев, Н.И. Орлова*
Художественные редакторы *Н.И. Орлова, Г.С. Самсонова*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *З.И. Гаврилова*
Компьютерная верстка *Е.В. Ивановой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 6600. Подписано к печати 05.05.12. Формат $70x90^1/_{16}$. Бумага офсетная. Гарнитура Букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 11,7+0,29 форз. Уч.-изд. л. 11,84+0,4 форз. Тираж 4000 экз. Заказ № 689. Изд. № 27.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | Аа | Ăă | Бб | |
| Ее | Ёё | Ĕĕ | Жж | |
| Лл | Мм | Нн | Оо | |
| Тт | Уу | Ӳӳ | Фф | |
| | Щщ | ъ | Ыы | ь |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Вв<br>*Вв* | Гг<br>*Гг* | Дд<br>*Дд* | |
| Зз<br>*Зз* | Ии<br>*Ии* | Йй<br>*Йй* | Кк<br>*Кк* |
| Пп<br>*Пп* | Рр<br>*Рр* | Сс<br>*Сс* | Çç<br>*Çç* |
| Хх<br>*Хх* | Цц<br>*Цц* | Чч<br>*Чч* | Шш<br>*Шш* |
| Ээ<br>*Ээ* | Юю<br>*Юю* | Яя<br>*Яя* | |



Чăваш кĕнеке издательстви